**Автан автать**

Ки-ки-ри-ик! шур автан!
Ки-ки-ри-ик! хыт юрлан!
Автан автать, тул çутăлать,
Ачасене вăратать,
Ĕçлĕр, тесе васкатать.

Вăранăр-ха, ачасем!
Тăрсамăр-ха, паттăрсем!
Хĕвелтухăç хĕрелет,
Шурти тĕтре сирĕлет,
Кайăк юрри илтĕнет.

Ки-ки-ри-ик! шур автан!
Ки-ки-ри-ик! хыт юрлан!
Автан автать, тул çутăлать,
Хĕвел тухни курăнать,
Ялйыш ĕçе тытăнать.

Вăранăр-ха, ачасем!
Тăрсамăр-ха, паттăрсем!
Пит çыварсан, ял кулать,
Кам ĕçлекен ыр курать.

1922

*Трубина, М. Автан автать : [сăвă] / М. Трубина // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2015. – [Т. 4] : Ача-пăча валли çырнă хайлавсем. – С. 39.*